# «Çивěч чěлхеллě...»



ĂРУ хыççăн ăру пысăк хавхаланупа вуласа чун лăпланăвне тупма пулăшакан паллă çыравçă вăл – Нелли Петровская.

Чи малтан эпě унăн сăнарлă, витěмлě чěлхи – хăйне евěрлě стилě пирки каласа кăтартасшăн. Унăн ěмěрě – халăх ěмěрě. Нелли Петровская çырнă калавсемпе повеçсене, романсене хăйпе пěрле вăрçă хыççăн е вăрçă вăхăтěнче нуша чăтса-тӳссе ирттернě, çапах та пурнăç илемне сыхласа-упраса хăварма тăрăшнă пархатарлă ӳсěмěн биографийě теме пулать.

Унăн сăнарлă, илемлě чěлхине ытти çыравçăсем те асăрханă. Çакна пěр тěслěхпе çирěплетем-ха. Йывăр чирленě анне 1962 çулта республика больницинче сипленетчě. Шăп та лăп чаплă драматург тата ăста тухтăр Петр Осипов пăхса тăракан чирлě çынсен палатинче выртнă вăл. Пěррехинче кучченеç пама ун патне Неонила персе çитет. Петр Осипов ăна палласа илет. Литература пирки сăмах хускатаççě вěсем. Паллă драматург Неонила хăйлавěсене те вуласах тăнă иккен. "Ну, чěлхӳ санăн мěнешкел çивěч, сăнарлă", – тет вăл мăшăрăма хавхалантарса. Çакна анне итлесе выртать. Хут пěлменскер, паллă çыравçăн сăмахěсене вăл ял хěрарăмě пек ăнланса юлать. Кинě хутне кěрсе: "Ара, пирěн, хěрарăмсен, чěлхи çавнашкалрах пулать çав. Час-часах тӳртен кастарать..."

Çак путишле калаçăва аса илсе Неонила час-часах ахăлтатса кулатчě. Вулакан асăрхарě пулě: эпě "Нелли" мар, "Неонила" тесе палăртрăм çыравçа ятне, мěншěн тесен иртнě ěмěрěн 50-měш çулěсенче "Неонила Кузьмина" тесе алă пусатчě хăйěн сăввисем умне. "Ялав" тата "Çеçпěл çеçкисем" кěнекере пичетленме пуçланă çамрăк хěр-сăвăçă каярахпа Нелли Петровская романист пулса тăнă. Вăлах, 24-25 çулти хěр, тăван ялěнче – Тутар республикинчи Альшихре – "Пушар" ятлă драма пулăмěсемпе чун-кăмăла кисретекен поэма шăрçаланă. Шупашкара килсен унпа Александр Алкана, Митта Ваçлейне паллаштарать. Ăста сăвăçсене поэма килěшет. Вěсем Неонилăна Мускаври М.Горький ячěллě литература институтне вěренме кěме сěнеççě. Виктор Рсай асăннă поэмăна вырăсла куçарма килěшет.

1957 çулта Неонила Кузьмина – М.Горький ячěллě литература институчěн студенчě. Унăн /вырăсла тӳрем куçару урлă/ калавěсемпе чи малтан хăйпе пěр курсра вěренекен Светлана Соложенкина сăвăç паллашать. Тавçăруллă вырăс хěрě çапла калать кěскен: "Хи-хи, Мы – стихи".

Ку вăл Неонилăн калавěсем поэзи жанрěнчен уйрăлса кайманнине тата вěсем сăнарлă, илемлě йěркесемпе палăрнине, хăйсен кěвěлěхěпе тыткăнланине пěлтерет.

Шел те, "Чыс", "Çил-тăманлă каç", "Шурă лили" кěнекесен авторě Чăваш Писателěсен союзěн членě пулнине ěнентерекен пěчěк кěнекене те юлашки çулěсенче çеç алла тытса курчě. Юрий Скворцов, Алексей Талвир, Илпек Микулайě çырнă рекомендацисем те пулăшаймарěç ăна. Илмерěç, такăнтарчěç. Каярахпа та çапла пулчě, йышăну комиссийě питех васкамарě.

Неонила ал ěçне те пěлетчě: çěлетчě, çыхатчě. Тěрлě хура ěçрен ěмěрне те пăрăнман вăл. Малтан "Çамрăк коммунист" хаçатра, унтан типографире тата Чăваш кěнеке издательствинче корректорта вăй хучě. Кайран вара пичетпе çыхăннă учреждениесенчен пăрахах уйрăлса кайрě. Шупашкарти тěрлě заводра ěçлерě, хăйěн ěç йышěпе пурăнчě. Унăн повеçěсенчи сăнарсем те çав йышри çынсемех. Вěсем – халăх асěнче. Пěрле ӳснě, ěçленě тантăшěсем Неонилăн ěмěрне чěрě вăй парса тăнă.

**Николай ТЕВЕТКЕЛ,**
**ЧР искусствăсен тава тивěçлě деятелě.**